40-186
рег № 44.

МАКСИМ ЯСТРАН

2920

# ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР

Сăвăсем

ХАЛĂХ ТВОРЧЕСТВИ ÇУРЧĔ
ШУПАШКАР ◆ 1940

*МАКСИМ Я[illegible]ГРАН*

# ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР

**Сăвăсем**


ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве 5
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
«22/II» 1940 г.
Подпись



ХАЛĂХ ТВОРЧЕСТВИ ÇУРЧĔ
ШУПАШКАР ◆ 1940

# СТАЛИНЛА ЯЛАВ

Кĕрешӳсем витĕр
Чаппа тухнă эпĕр,
Вăй-хал çиçнĕ пирĕн вутлă хĕвел пек.
Çут-кăвак Дон çийĕн,
Ешĕл хирсем тăрăх
Утсене ташлатнă йăвăр йĕнерпе...

Йышăнчĕ хавассăн
Кăнтăрти Царицын,
Атăлпа туслашрĕ Крым, Урал, Кавказ:
Харсăр чунлă маршал
Паттăр Ворошилов,
Аслă Ленин—Сталин чĕнчĕç атакка!

Тухăçран ир умĕн,
Анăçран каç кӳлĕм
Шăвăнать пулсассăн самурай е пан,—
Асăлтерпĕр эпĕр
Вутлă çиçĕм евĕр
Епле чапа тухрĕ кӳлĕмĕр Хасан.

Тинĕсе чăмаймĕ,
Сăрт çине ухаймĕ
Шанчăкне çухатнă ирсĕр йыт-тăшман.
Пĕр хут мар кăтартнă,
Татах та кăтартĕ
Хăй вăйне хăватлă çĕрĕм-шывăм ман.

Ахаль мар халь пирĕн
Хĕвел пек çут орден
Чĕрере çĕклерĕ иксĕлми хăват.
Кĕрешӳсем витĕр
Тек çĕклĕпĕр эпĕр
Сталин ятне çырнă Хĕрлĕ ялава.

1939.

## ОКТЯБРЬ ТИВЛЕЧĔ

Иксĕлми телей пиллерĕ
Вут Октябрь халь пире.
Чи мухтавлă, чи телейлĕ
Халăх эпĕр тĕнчере.

Суккăрне вăл куçлă турĕ,
Çивĕчлетрĕ ун ăсне.
Сирчĕ вăл шур питсем тăрăх
Ĕмĕрхи куççуль шывне.

Ял питне вăл улăштарчĕ
Илĕртӳллĕ сăн-тĕспе,
Çуталать колхозник пӳрчĕ
Ленин—Сталин çутипе.

Çамрăксемшĕн шкулсем уçă,
Ваттисемшĕн те уçах.
Уйхир урлă суха хыççăн
Тек утмаç пуçа усса.

Комсомолка - комбайнерка—
Хӳхĕм, пăчăр пек, хĕрсем;
Хăлат куçлă летчик - каччă—
Ӳсĕмсем тăваç хĕрсех.

Вĕсене çĕршыв ўстернĕ
Чи телейлĕ чыспала.
Çавăпа кашнин вĕсенĕн
Ўсĕмсем куллен пулаç.

Иксĕлми телей пиллерĕ
Çут Октябрь халь пире.
Чи хаваслă, чи телейлĕ
Халăх эпĕр тĕнчере.
1937

## С. М. КИРОВА

Хĕле кĕрсессĕн—шăннă Уржум шывĕ,
Çурхи кунра вăл ирĕлнĕ каллех.
Анчах та эсĕ—çав Уржумăн ывăль,
Çурхи куна курман ун чух питех.

Телей çулне кăтартнă Аслă Ленин
Аçу пекех сана пăхни—асра.
Вăл чыспа сан чĕрӳ хĕрсе ĕçленĕ,
Вĕренӳре çĕкленнĕ хытăрах.

Ыр шухăша сăрмашкăн пит те йăвăр,
Нумай пĕлсе, нумай ĕçлес пулать.
Яту сан пулчĕ кĕрешӳ ялавĕ—
Чĕнет телей патне малран мала.

Ăшри хĕме тĕрме та сӳнтереймĕ,
Чуна лăплантараймĕ, нухайкка—
Йăвăр вăхăта тӳснĕ çут ĕмĕт
Телей çулне хăвармĕ аякка.

Томск тĕрми, Нарым крайĕ те саншăн—
Пурнăç çине хăравçăн пăхни мар.
Эс çапăçнă, кĕрешнĕ пирĕн чысшăн,
Вĕрентрĕн эс пире те çапăçма.

Ленинграда çитерчĕ мана ĕмĕт,
Казахстана çитерчĕç шухăшсем.
Кирек ăçта çитертĕр умри ĕмĕр,
Санăн ятна пĕрлех çӳрĕп илсе.

Вилми ĕçсем нихçан та манăçмаççĕ,
Историшĕн юлаççĕ тивĕçре.
Нихçан та сӳнмĕ Киров чĕрин ĕçĕ,
Ун ĕçĕ юлĕ ĕмĕр-ĕмĕре!

1937

## *ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР*

Кунçул çутă, ĕмĕт тулăх,
Пурнăç ырă та пуян.
Сĕм вăрман, ешĕл хир-улăх—
Кашнин çĕнĕ тум паян.

Кунçул йĕрĕ çутă, çутă,—
Тупсăмне аса илсен,
Кинемейĕн калаçу та
Сар çу евĕр ирĕлет:

Ешĕл хир тумне йăтсассăн
Пĕр-ик вунă çул —тахçан,—
Юланутлă çын йăвашшăн
Сив шыв ыйтнă кантăкран.

Хăлат куçлă юланутçă
Кантăк умĕн иртсенех,
Туйса илнĕ карчăк уççăн
Юланутçăн хăватне.

Манми юлнă асăнмаллăх:
Уссисем, çавра атти,
Шлемĕ çумĕнче хĕм-вутлăн
Хĕрлĕ çăлтăр çутатни.

Ешĕл тум йăтсан хир-улăх,
Асилет те çаксене,—
Çĕкленет карчăк хăюллăн,
Манать хăйĕн ватлăхне!

Кунçул çутă, ĕмĕт çутă,
Пурнăç тулăх та пуян.
Пачĕ, —тет вăл, —Хĕрлĕ çăлтăр
Çак телейлĕхе паян.

1937

# АВГУСТ

Куллен-кунах, кирек хăш уйăхра та,
Каймастăн, август, эсĕ ман умран.
Эп сан тумна хĕлле те уйăратăп,
Çу кунĕнче ямастăп та асран.

Мĕнма тесен, кашни çыншăн-этемшĕн
Çуралнă кун тухмасть, теп, манăça—
Ем-ешĕл август, эсĕ çавăнпа-ши
Çĕклентерме пĕлетĕн ман чуна?

Çуралнă кун пуриншĕн те пит паллă,
Çуралнă кун ман август ăшĕнче...
Сăнанă пуль: сĕткенлĕ çимĕç тулăх
Тăрать ялан çак уйăх хушшинче.

Астунă пуль: уйхирĕн ешĕл тумĕ
Ылттăнланать çак уйăх çитнĕ май.
Сăнанă пуль: шывсенĕн кĕмĕл хумĕ
Çак уйăхра тăп-тăрă уйрăмах.

Куç хывнă пуль çут августри садсенĕн
Улмисем кĕрпеклĕн пиçнине,
Тутаннă пуль колхозник ĕнисенĕн
Сĕт-турăхĕ хăçан сĕткенлине.

Итленӗ пулӗ самӑр путене те
Хӑй юррине илемлӗн тӑснине?—
Ҫаксем, август, сан. Эп килленетӗп:
Ҫак сӑн-тӗссем умра ман—кулленех.

Ҫак сӑн-тӗссем нихҫан та манӑҫмаҫҫӗ,
Ҫуралнӑ кун тухман пек манӑҫа.
Сӗткенлӗ август, ҫавӑнпах-ҫке эсӗ
Ҫӗклентерен ялан та ман чуна.

1937

# МАНĂН ТУПА

Сан кăмăлшăн, ĕçшĕн,
Чечеклĕ çĕршывăм,
Хисеплĕх парнийĕ
Парап сăвăра.
Чунпа-чĕремпе те
Эп сан тантăш ывăл,
Санпах тан эп кĕтĕм
Çак çĕн тапхăра.

Ӳстертĕн, вĕрентрĕн,
Çĕршыв, ывăлна эс:
Колхозник, студент та—
Ят патăн савса;
Анчах пуринчен те
Хакли—комсомолец,—
Вăл ятшăн ялан эп
Çĕклетĕп сасса.

Кив мул тапăнмашкăн
Штыкне çивĕчлет-тĕк,
Сас парăп эп, парти
Хушсассăн, çапла;
—Çĕршывăм, эп саншăн
Пуçа пама хатĕр.
Хастарлăн эп тытăп
Пăшал-штык алла.

Эп, вут-хӗм чӗреллӗ
Патвар комсомолец,
Кӑтартӑп геройлӑх
Ялан-яланах:
Мана эс ӳстернӗ,
Мана эс вӗрентнӗ,—
Юнпа, чӗремпе те
Эп пулӑп саннах!

1935

# Ю Р Ă

*(Исаковский майлă)*

Ешĕл курăк ахалех черченкĕ
Хурлăхан çырлиллĕ пахчасен.
Ахалех Маруç патне çӳреççĕ
Юрату тупасшăн каччăсем.

Çичĕ каччă юратушăн пычĕç,
Сар хĕр пуринчен те пăрăнать.
Пĕр каччине çеç ăш сăмах пачĕ,
Хирĕç тухсах илчĕ вăл ăна.

Тĕлпулу мар, уйрăлу вăл пулчĕ—
Çутă, тăрă шывăн хĕрринче.
Каччă хĕрне ăш сăмахне пачĕ
Юрату сӳнес çукки çинчен.

Шуçăмчченех хĕр сăмах вакларĕ,
Уйрăлчĕ куççуль тăкмасăрах.
Асăнмаллăх нимĕн те памарĕ,
Пачĕ чĕрине—асра тытма.

Тусĕ ун инçе - инçене кайрĕ,
Шăпчăк пек, пит савнăçлăн вĕçсе.
Кам пĕлет, тен, çакăн пек каçра вăл
Асилет пуль хăйĕн чĕкеçне...

Амур хĕрринче пострa тăрать вăл,
Çĕршыва сыхлать тăшмансенчен.
Чĕкеç пек çитсессĕн хĕр çырăвĕ,
Ответлет: „кĕт эпĕ çитиччен“.

Уйăх çутă. Каç курнать черченкĕн,
Хĕр ларать ик çивĕтне явса.
Ахалех-çке ун патне çÿреççĕ
Юрату тупасшăн каччăсем.

1936

# ХĔР ЙĔТЕСĔ

Çулсерен колхозăн хирĕ
Мухтанать сар тумĕпе,
Ман умра колхозник хĕрĕ
Пуç таять сар пучах пек.

Умăмра ыраш ани те
Алăмра хĕр йĕтесси
(Асилетĕп-çке эп пĕлтĕр
Хĕрпе тытнă йĕтесе):

—Килес çул сар хирте эпĕр
Тыр вырар та, кĕркунне
Туй тума лаша кӳлетпĕр—
Çăмарта пек самăрне.

Ак, кăçал та ыраш пиçрĕ,
Хăмăш пек ларать хирте.
Ума тухрĕ колхоз хĕрĕ,
Аса килчĕ йĕтес те.

Тыр выратпăр каллех туслăн
Колхозри анлă уйра.
Шухăшлап: йĕтесе манăн
Пурнăçласчĕ хăвăртрах.

Васкатать ĕç. Хĕр йĕтесĕ
Тухмасть манăн чĕререн.
Ĕмĕтсем лаша кӳлеççĕ,
Юнашар лартаç хĕре.

1938

# ИÇĔМ ÇЫРЛИ

Çурçĕр каччи эпĕ,
Аш кăнтăра çитрĕм.
Сарă хăйăр çийĕн
Ак, çӳреп утса.
Куç умне сасартăк
Кăнтăр хĕрĕ тухрĕ,
Шăрăхран шур пурçăн
Тутăрне уртса.

Йăрăс кипарис пек
Яштака чечен хĕр
Иçĕм çырли сĕнчĕ
Хăйĕн сăнлинех.
Тавçăрса илетĕн:
Юратӳ телейĕ
Пĕтĕмпех çĕнетнĕ
Хăйĕн йăлине.

Эп, чăваш ачийĕ,
Вăл, дагестан хĕрĕ,—
Пĕр-пĕрне палланăн
Пăхрăмăр куçран.
Иçĕм çинче çиçрĕ
Юрату хĕлхемĕ,
Савнăçпа телей те
Курăнчĕ аван.

Ман çӗршывра халӗ
Юрату телейлӗ,
Ман çӗршывра савнăç
Тупнă тивӗçне.
Савăннипе эп те
Сăвă кӗвӗлерӗм—
Исӗм сырли сӗннӗ
Хӗрӗн кăмăлне.

1937. Махач-Кала.

# Ç у л

Выртать мăн çул яка çатма пек;
Вăрман та хир, сăрт сăпатне
Виçет мăн çул. Эпир сăнатпăр
Унăн чапне те илемне.

Ку çулпала Буденный учĕ
Вут-çиçĕм пек иртнĕ çиçсе.
Ун хĕмĕнче асаплăх сÿнчĕ,
Телей çĕкленчĕ ун çинче.

Сар тул ÿсет çул тавра халĕ
(Авал ÿсетчĕ эрĕм çеç).
Хăмла çырли те хĕвел тĕслĕн
Курнать сар тулă умĕнче.

Хăмла çырли çинче кураççĕ
Яшсем хăйсен хĕр-туссене,
Сар тул пек ешĕл кашни каччă—
Ÿсеç хĕрсенĕн кăмăлне.

Хăмла çырли пек—тулли сăнлăн,
Тул пек—ÿснишĕн мухтавра,—
Çатма-çул тăрăх пĕр тăванлăн
Салам яратпăр Мускава.

Салам çине çыратпăр эпĕр:
Вăрçма лексессĕн тăшманпа,
Сар тул пек штык çӳле çĕклетпĕр,
Çырла пек хĕрĕпĕр юнпа.
1938.

# ТИМЛЁ ТИМУШ

Ирпе тăчĕ те Тимуш
Çурĕ хăйĕн пит-куçне.
Унтан вĕçрĕ, çил пекех,
Витене—тихи патне.

Колхозри чаплă вите
Тимуша савса кĕтет.
Хура „Машкăн" тихине
Якатать вăл кулленех.

Якатать те ачашлать,
Хăналать ăш сĕлĕпе.
Ташлама та вĕрентет
Ворошилов учĕ пек.

Хĕрлĕ Çарăн ретĕнче
Пулап, тет, вăл çитĕнсен;
Ташлăн,— тет хăй тихине,—
Ворошилов умĕнче.

Пĕрлех те кайăпăр, тет,
Тăшман çарĕсем çине,—
Çут телейшĕн çапăçма
Савнă маршал чĕнсенех.

Сар кӑлканлӑ уй-хирте
Эпĕ вĕçĕп, тет, çил нек.
Сирпĕнĕ хĕм хыççӑн хĕм
Йĕс таканӑн айĕпе.

Мухтавпа чапланӑн эп
Хĕрлĕ Çарӑн ретĕнче,
Чапа тухĕ манӑн ут
Ворошилов умĕнче.

Çакӑн нек çут ĕмĕтпе
Çĕкленсе-хавасланса,
Ӳстерет тимлĕ Тимуш
Хĕрлĕ Çар валли лаша.

1939

# РЕПРОДУКТОР УМĚНЧЕ

Хама яланах эп телейлĕн туятăп
Çак ирĕк, хĕвеллĕ çĕршыв хӳттинче.
Манпа каласма тытăнсан репродуктор,
Куратăп хама эп çĕршыв умĕнче.

Куçсем умĕнчех янăрать Мускав шавĕ:
Çап-çут тумĕпе мăн Метро ялтăрать;
Тахçан ăмăрт-кайăка пуç тайнă башня
Паян хапăллать пирĕн çут çăлтăра.

Çутатать хĕрлĕ çăлтăр çутти ман пите те,
Ун çут шевлипе хĕмленет яш чĕрем.
Çулпуç сассине Кремльрен эп илтетĕп,
Ун чух хама эп те туяп Кремльре.

Чингис-Хан учĕсем тапăртатнă хиртен эп
Илтетĕп паян çут комбайн кĕввине.
Комбайнерĕ—паллă хĕр-каччă, пĕлетĕп,
Куратăп вĕсен чыслăхне, тивĕçне.

Шавпа йăтăнать Каçпи тинĕсĕн хумĕ,
Туркестан хирĕнче хĕрсем мамăк татаç,
Хăйсен чапĕпе иртеç ман куçсем умĕн,
Илемлĕхĕпе чунăма йăпатаç.

Кашлать, вăрман пек, Украинăра тулă;
Куллен хăватне çĕклет Сталинск, Урал.
Кашни вырăнтах ман çĕршыв пуян, тулăх,
Кашни кĕтес пурлăх-пуянлăх парать.

Калаçма тытăнсан Хĕрлĕ çăлтăрлă башня,
Вăрăма тăсăлсан мăн хаваслă чĕр шав,—
Сасси янăрать аслă Сталин юлташăн—
Вăл сасса кашниех чĕререн йышăнать:

Ун тивлечĕпелен çĕкленет уй-хир чапĕ,
Заводсем трубине çĕклеç ун чысĕпе.
Çавăнпа та, çулпуç сассине илтсенех, эп
Мухтанап çĕршывпа, пурнăçпа, телейпе!

1937

# ТУПМАЛЛИ


стр.

Сталинла ялав . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

Октябрь тивлечĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5

С. М. Кирова . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7

Хĕрлĕ çăлтăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9

Август . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 11

Манăн тупа . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13

Юрă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15

Хĕр йĕтесĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17

Ирĕм çырли . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 19

Çул . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21

Тимлĕ Тимуш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23

Репродуктор умĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . 25

Редактор И. ИВНИК.
Техредактор М. СОКОЛОВ.
Послано в пр-во 14. X. 1939.
Подписано к печати 25. I. 1940.
Уполномоченный Чувашглавлита № 1229
Заказ № 844. Тираж 1.00 экз.
Об'ем 0,75 п. л.

Чебоксары, тип. „Чувашпромполиграф“

Хакӗ 75 пус
Цена 75 коп.

*МАКСИМ ЯСТРАН*

# КРАСНАЯ ЗВЕЗДА

Стихи

ДОМ НАРОДНОГО ТВОРЧЕСТВА ЧАССР
ЧЕБОКСАРЫ • 1940